27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 19 ЭРНЕКУН 98(6593) №

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

## Чăваш АССР Совнаркомĕнче

### Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене тăвасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ вăйлă тырпулшăн тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă колхозсене пама Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен 10 Хĕрлĕ Ялавне тума йышăннă, вĕсенчен 5-ĕшне вăйлă тырпул туса илнĕшĕн, 5-ĕшне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатнăшăн памалла тунă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене çулталăкра виçĕ хут пăхса тухма хушнă, социализмлă ăмăртура мала тухнă колхозсене Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çулталăкра виçĕ хутчен çак тапхăрсенче пама палăртнă.

**Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн:**

а) малтанхи хут — çураки планне палăртнă вăхăтра, лайăх пахалăхпа тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн— 1944 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче;

б) иккĕмĕш хут — тырпул пухса илмелли, çĕртме тумалли, кĕрхи тырăсем акмалли тата кĕрхи çĕртме тумалли плансене кăтартнă вăхăтра тултарнăшăн —1944 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче;

в) виççĕмĕш хут — çулталăкри результатсем тăрăх мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсен планне тата государство поставкисемпе натуроплата обязательствисене тултарнăшăн.

**Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатнăшăн:**

а) малтанхи хут — выльăхсене мĕнле хĕл каçарни тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç 1944 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле тăни тăрăх;

б) иккĕмĕш хут — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси тата унăн продуктивноçне ӳстересси 1944 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле тăни тăрăх;

в) виççĕмĕш хут — государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри ĕрчетесси тата унăн продуктивноçне ӳстернин тата государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ памалли обязательствăсене тултарнин результачĕсем тăрăх памалла.

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш тата 96-мĕш номерĕсенче).

**КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОН ТĂРĂХ**

1. Василий Алексеевич **Алексеева**—машинно-тракторнăй станцин директорне.
2. Дмитрий Иванович **Беляева** — Шмидт ячĕпе тăракан колхозăн пчеловодне.
3. Мария Андреевна **Волковăна** — Шмидт ячĕпе тăракан колхозăн сурăх пăхаканне.
4. Иван Георгиевич **Георгиева** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
5. Сафа Гильманович **Гильманова** — «Ударник» колхозăн председательне.
6. Васьян Алексеевич **Ефремова** — машинно-тракторнăй станцинчи трактор бригадин бригадирне.
7. Анна Кирилловна **Жиловăна** — «Красный Октябрь» колхозăн свинаркине.
8. Степан Никифорович **Квасова** — «Искра 1» колхозăн председательне.
9. Леонтий Иванович **Киргизова** — «Мурат» колхозăн колхозникне.
10. Яков Иванович **Левина** — машинно-тракторнăй станцин слесарь-заливщикне.
11. Осип Николаевич **Мокеева** — «Светлая жизнь» колхозăн звеноводне.
12. Елизавета Степановна **Мухинăна**— машинно-тракторнăй станцин комбайнеркине.
13. Анисия Ивановна **Наумовăна** — «Мурат» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
14. Акулина Николаевна **Николаевăна** — «Трактор» колхозăн ферма заведующине.
15. Николай Никифорович **Никифорова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
16. Василий Николаевич **Падюкова** — райсовет исполкомĕн председательне.
17. Максим Степанович **Степанова** — «Красное Сормово» колхозăн ферма заведующине.
18. Иван Михайлович **Соловьева** — машинно-тракторнăй станцин механикне.
19. Нина Александровна **Соловьевăна**— машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
20. Ольга Назаровна **Тарнинăна** — «Двигатель революции» колхозăн колхозницине.
21. Василий Степанович **Толмачева** — «Дубовка» колхозăн председательне.
22. Анфиса Трофимовна **Трофимовăна** —«Красное Сормово» колхозăн дояркине.
23. Павел Николаевич **Трофимова** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
24. Асьма Хасьяновна **Гукаевăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
25. Клавдия Серафимовна **Тумайковăна** —машинно-тракторнăй станцин комбайнеркине.
26. Константин Димитриевич **Турханова**—«Пролетарий» колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
27. Степан Никитич **Шаринкина** — Сĕнтĕр ялсовечĕн председательне.

**КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОН ТĂРĂХ**

1. Федор Андреевич **Андреева** — Степан Разин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
2. Виктор Афанасьевич **Афанасьева** — машинно-тракторнăй станцин трактористне.
3. Василий Гаврилович **Гаврилова** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
4. Анфиса Порфирьевна **Галкинăна** — «Комбайн» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
5. Мария Григорьевна **Григорьевăна** — Ильич ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
6. Никандр Григорьевич **Григорьева** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
7. Лаврентий Гордеевич **Гордеева** — «Янмурзино» колхозăн тимĕрçине.
8. Екатерина Захаровна **Захаровăна** — «Коминтерн» колхозри — фермăсен заведующине.
9. Екатерина Ивановна **Ивановăна** — машинно-тракторнăй станцири трактор бригадин бригадирне.
10. Назар Иванович **Иванова** — «Красная звезда» колхозăн председательне.
11. Прасковья Илларионовна **Илларионовăна** — «Родина» колхозăн колхозницине.
12. Ефим Павлович **Крылова** — «Шимар» колхозăн председательне.
13. Анна Григорьевна **Марзновăна** — «Чамыш» колхозăн кролик пăхаканне.
14. Андрей Матвеевич **Матвеева** — «Пятилетка» колхозăн председательне.
15. Афанасий Михайлович **Михайлова** — СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Красноармейски районри уполномоченнăйĕн агентне.
16. Степан Павлович **Павлова** — «Красная звезда» колхозăн колхозникне.
17. Марфа Петровна **Петровăна** — «Янмурзино» колхозăн колхозницине.
18. Ольга Петровна **Петровăна** — Буденный ячĕпе тăракан колхозăн чăхчĕп пăхаканне.
19. Василий Романович **Романова** — «12 лет Октября» колхозăн старши конюхне.
20. Василий Семенович **Семенова** — «Буксир» колхозăн председательне.
21. Евгения Сергеевна **Сергеевăна** — «12 лет Октября» колхозри фермăсен заведующине.
22. Петр Степанович **Степанова** — «Чамыш» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
23. Иосиф Титович **Титова**—машинно-тракторнăй станцин трактористне.
28. Константин Федорович **Федорова**— «Пятилетка» колхозăн бригадирне.

**ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ**

1. Анна Прокопьевна **Александровăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
2. Федор Тимофеевич **Афондеркина**— машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
3. Елена Дмитриевна **Беловăна** — «Радио» колхозри дояркăна.
4. Иван Ильич **Белова** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
5. Андрей Васильевич **Васильева** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
6. Екатерина Александровна **Васильевăна** — Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн сысна пăхаканне.
7. Александра Григорьевна **Денисовăна** — «Агроном» колхозăн дояркине.
8. Анна Никифоровна **Жерженевăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
9. Мария Ивановна **Магаськинăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
10. Мария Прокопьевна **Магаськинăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

(Малалли пулать)

## Çуракине пур майсемпе те хăвăртлатар!

### Ĕçре уйрăм сдельщинăна анлăн сарар, малта пыракан колхозсем кая юлнисене социализмлă пулăшу парассине организацилер!

### Кая юлнă колхоза пулăшаççĕ

МУРКАШ, майăн 18-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Атапай ялсоветĕнчи «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, суртыррисене акса пĕтерчĕç. Ĕçе тĕрĕс йĕркелени, уйрăм сдельщинăпа ĕçлени, лашасене лайăх пăхни ака ĕçне вăхăтра та паха туса хăварма май пачĕ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз паян 9 гектар çĕрулми лартса пĕтерет. Ку ĕçе «Крестьянин» колхоз та паян-ыранах ĕлкĕртет.

Çак малта пыракан колхозсем Ярапайкассинчи юлса пыракан «Коммунизм» колхоза социализмлă пулăшу пама йышăнчĕç. Вĕсем çав колхоза 4-шар лаша тата сынсем ячĕç.

Асăннă колхозсенче халĕ хĕрсех пахча-çимĕçсем лартаççĕ, кантăр акаççĕ.

**Т. ИВАНОВ.**

### Çураки хăвăртлăхне ӳстермелле

КАЛИНИНО, майăн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паянхи кун тĕлне районри 14 колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтерчĕç. Вĕсен шутне малта пыракан «Броневик», «Большевик», «Трактор», «Çуталла», «Пучах», «Клевер», «Красноармеец» тата Пушкин, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем т. ыт. те кĕреççĕ. Çак колхозсенчи ĕçĕн ăнăçлăхне чăн малтанах ĕçе организацилеме пĕлни татса панă. Кунта пĕтĕмпех звеносемпе тата уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, кам мĕнле хăвăртлăхпа тата мĕнле пахалăхпа ĕçлени куллĕнех паллă. Лашасене ака çинче лайăх пăхаççĕ, вĕсемпе пĕлсе усă кураççĕ, вăхăтра çитереççĕ, шăвараççĕ, кантараççĕ.

Анчах та юлашки кунсенче ака ĕçĕнчи хăвăртлăх чакни палăрать, ăна ĕнтĕ район 1-мĕш вырăнтан 3-мĕш вырăна анса ларни те лайăх çирĕплетсе парать. Хăшпĕр колхозсем хăйсен начар ĕçĕпе района малти вырăнта пыма чăрмантараççĕ. Ассакасси ялсоветне кĕрекен колхозсем чăтма çук япăх ĕçлеççĕ. «КИМ» колхоз çуракинче икĕ эрне ĕçлет, апла пулин те кунта пурĕ те 120 гектар кăна акнă. Ĕç çакăн пек вăраха тăсăлни кунта чи малтан уйрăм колхозниксен ĕçри дисциплини начаррине килет. «КИМ» колхозри Никитинăпа Чернова юлташсем акана яланах кая юлса тухаççĕ, ĕçрен ирех кĕреççĕ, нихăçан та ĕç нормине тултармаççĕ, шайрăклă сухалаççĕ тата ыт. те. Чернова колхозница ытти ĕçсенче те япăх ĕçлет, вăл çак вăхăта çитсе 15 ĕç кунĕ кăна тунă. Кунта агротехникăна пăсаççĕ, тырăсене çаплах алăпа акаççĕ. Уйрăм сдельщинăна организацилемен. Кам мĕн тăвас тет, çавна тăвать. Колхозниксене ĕçре кирлĕ пек ертсе пыни çук.

Юлса пыракан «Труд» колхозра та ĕç дисциплини питĕ начар. 2-мĕш бригадăри сухаçăсем — Л. Аникинăпа У. Денисова колхозницăсем ĕçе йĕркеллĕ тухмаççĕ, анчах никам та вĕсене ответ тыттарма шутламасть. Колхозри учет ĕçне счетовод Г. Родионов пĕтĕмпех пăтраштарса янă, çуракинче кам миçе ĕçкунĕ тунине пĕлмеççĕ. Колхозниксем ĕç кунĕсене кĕнеке çине ларттарма пырсан, Родионов вĕсене вăрçса кăларса ярать.

Кадеркино ялсоветĕнчи «Молния» тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсем те чăтма çук начар ĕçлеççĕ. «Молния» колхоз çураки планне пĕтĕмпе те 9 процент, Каганович ячĕпе тăракан колхоз 37 процент кăна тултарнă.

Ака ĕçне хăвăртлатма пур условисем те пур. Малта пыракан колхозсен ĕç опытне илсе, кашни колхозрах уйрăм сдельщина çине куçмалла, ĕç дисциплинине пăсакансене халех ответ тыттармалла. Кая юлнă колхозсен малтисемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

### Колхоза пулăшаççĕ

КАЛИНИНО, майăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Аччакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пĕлӳ тĕрĕслевне хатĕрленнипе пĕрлех колхоза çураки ĕçĕнче пулăшаççĕ. Тимофей Степановпа Петр Михайлов комсомолецсем иртнĕ кăнмалли кун «Социализм çулĕпе» колхозра икĕ касăллă плугпа сухаласа нормăна 120 процент тултарчĕç. Ксения Игнатьева, Александра Михайлова комсомолкăсем урок хыççăн колхоза пахча-çимĕçсем лартма пулăшаççĕ. Уроксем хыççăн е канмалли кунсенче ĕçлесе, вĕсем кăçал кашниех 20-шер ĕçкунĕ ытла тунă. Ĕçчен çамрăксем шкулта та яланах отлично вĕренсе пыраççĕ.

**Б. ШОРНИКОВ.**

**Çуракинче тухăçлă та паха ĕçленĕшĕн ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕпе ĕçсынни депутачĕсен районри совечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:**

7. Çĕрпӳ МТС-ĕнчи **трактерсен 1-мĕш номерлĕ бригади** (бригадирĕ **Д. И. Кириллов** юлташ). Çак бригадăн çураки вăхăтĕнче план тăрăх 246 гектар сухаламалла пулнă пулсан, вăл 249 гектар акнă, 50 килограмм горючи перекетленĕ. Чи лайăх трактористкăсем — **А. А. Лукина, Е. Лисицына** юлташсем хăйсен сменисенче 5-шер гектар сухаланă.

8. **Тракторсен 3-мĕш номерлĕ бригади** (бригадирĕ **Ф. И. Иванов** юлташ). Çак бригада тракторсемпе тумалли ĕç планне 105 процент тултарнă, 330 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Тракторист **С. Иванов** юлташ ХТЗ маркăллă тракторпа хăйĕн сменинче 6-шар гектар сухаланă, трактористка **В. Никитина** юлташ У—2 маркăллă тракторпа сменăра 5-шер гектар сухаланă.

9. **Тракторсен 10-мĕш номерлĕ бригади** (бригадирĕ **Т. С. Степанов** юлташ). Çак бригада тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне 115 процент тултарнă, 500 килограмм горючи перекетленĕ. Трактористсем **Гавриловпа В. Иванов** юлташсем сменăра 6-шар гектар сухаланă. **Антонов** юлташ «НАТИ» маркăллă тракторпа сменăра 9 гектара çити сухаланă.

10. **Тракторсен 12 номерлĕ бригади** (бригадирĕ **И. С. Коночкин** юлташ). Çак бригада план тăрăх çураки вăхăтĕнче 246 гектар сухалас вырăнне 265 гектар сухаланă, 200 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Тракторист **А. Серов** юлташăн план тăрăх 82 гектар сухаламалла пулнă, вăл 165 гектар сухаланă, хăйĕн нормине 8 гектартан пуçласа 9 гектара çити тултарса пынă.

## Шăхасан МТС-ĕ пек ĕçлемелле

Майăн 17-мĕшĕ тĕлне Шăхасан МТС-ĕ кăçалхи çуракинче планпа пăхнă 3.606 гектар вырăнне 3.840 гектар сухаларĕ, çав вăхăтрах 2.200 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. МТС-ри 12 бригадăран 6-шĕ плана ирттерсе тултарчĕç.

Я. Сергеев ертсе пыракан бригада 292 гектар вырăнне 348 гектар сухаланă, 148 килограмм горючи перекетленĕ. Н. Тимофеев бригади 483 гектар сухаланă, 630 килограмм горючи перекетленĕ. Н. Смирнов бригади 333 гектар сухаланă, 380 килограмм горючи перекетленĕ. Н. Александров бригади 318 гектар сухаланă, 270 килограмм горючи перекетленĕ. Çак бригадăсен çураки вăхăтĕнче план тăрăх кашниннех 292-шер гектар сухаламалла пулнă.

А. Григорьева юлташăн бригади 244 гектар вырăнне 258 гектар сухаланă, 178 килограмм горючи перекетленĕ. Сидоров Иван ертсе пыракан бригадăн план тăрăх 390 гектар сухаламалла. Ĕнерхи кун тĕлне вăл 398 гектар сухаланă. Çав вăхăтрах 276 килограмм горючи перекетленĕ.

Тракторсен бригадисем малалла та тимлĕн ĕçлеççĕ.

### Партипе комсомол организацийĕсен çураки ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пымалла

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 18-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри 24 колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтерчĕ. «Красная Армия» (председателĕ Анкудинов юлташ), Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çураки планне районра чи малтан тултарчĕç. Халиччен юлса пынă Сталин ячĕпе тăракан колхоз та кăçал мала тухрĕ. Колхоз председателĕ—коммунист Муравьев юлташ кăçал колхозниксене ĕçе пĕлсе организацилерĕ. Кунта агротехникăна лайăх пурнăçласа пыраççĕ: çуракинче пурĕ 118 гектар акмалла, вĕсенчен 93 гектарне машинăпа акнă. Суртыррисем айне 4.000 лав тислĕк тăкнă.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтернĕ колхозсен шутĕнче «Новая деревня» колхоз та пур (председателĕ Вдовин юлташ). Ку колхозăн лашасем самăр та вăйлă, çакăнпа пĕрлех кунта ака ĕçĕнче 5 вăкăрпа усă курнă. Çавăнпа та çураки ĕçĕсене 6 кунта вĕçленĕ (план тăрăх 8 кун пăхнă). Çак колхозра çамрăксем уйрăмăнах тухăçлă ĕçленине палăртмалла. Жуков, Донбачев, А. Пирогов, Лукоянова юлташсем куллĕнех нормăна 150 процент тултарса пынă. Уйрăм сдельщинăпа тата ăмăртса ĕçлени кунта ĕç ăнăçлăхне татса панă. Колхозниксем ĕçе ирхине 5 сехетре тухаççĕ те каçхине 9 сехетре тин таврăнаççĕ. Ĕçĕн пахалăхĕ те аван.

Комсомолăн «Красная Армия» колхозри пуçламăш организацине Кузнецов юлташ ертсе пырать. Вăл пур ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Çураки вăхăтĕнче 13 ретлĕ сеялкăпа кашни кунах 5-шер гектар акнă. Кузнецов ĕçлекен 1-мĕш бригада çураки ĕçĕсене ытти бригадăсенчен 3 кун малтан пĕтернĕ, ун хыççăн ытти бригадăсене пулăшма тытăннă, çапла вара колхоз çураки ĕçĕсене 8 кун хушшинче пĕтĕмпех вĕçленĕ.

Анчах районра чăтма çук кая юлса пыракан колхозсем те пур. Акă «Красный Волгарь» колхозах илер. Кунта председатель пулса Шмелев юлташ ĕçлет. Колхозри лашасем начар, вĕсене кирлĕ пек пăхмаççĕ, çавна пула ĕнтĕ кунта кăçал 19 лаша вилнĕ. Çак колхозра вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмеççĕ. Кĕрхи калчасене апатлантарман, сӳремен. Вăрлăхсене яровизацилемесĕр акнă, ăшăх сухалаççĕ тата ытти те.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз та юлса пырать. Кунта сеялкăсем пур, анчах та 120 гектартан 46 гектарне çеç машинăпа акнă. Ку колхозра парти организацийĕ те пур, унăн секретарĕ Громов юлташ. Тӳрех калаççă, Громов ĕçе ситĕлĕклĕ ертсе пымасть-ха. Колхозра формалин пулнă, çапах та вăрлăхсене 40 центнер çеç чӳхесе акнă. Кĕрхи калчасене те 5 гектар çинче кăна апат панă. Вăл çеç те мар, колхоз кондицие ларман пăрça вăрлăхнех акса хăварнă.

Партипе комсомол организацийĕсен çураки ĕçне большевикла ертсе пымалла, ĕçе мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле.

**МИТРОФАНОВА.**
**(Хамăр корр.).**

## Малтисемпе танлашмалла

КУСЛАВККА, майăн 18-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Машинно-тракторнăй станцин уйрăм бригадисем ака ĕçĕнче чылай паллă çитĕнӳсем турĕç. Антонов юлташ ертсе пыракан бригада çуркуннехи ĕçсен планне тултарнă. Бригадир хăй, 60 гектар сухалас вырăнне ĕнерхи кун тĕлне 68 гектар сухаласа, плана ытлашшипех пурнăçланă. Çак бригада 143,7 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Тракторист Иванов юлташ 49 гектар, Яковлев 85 гектар сухаланă. Çапла вара Антонов ертсе пыракан бригада пур енчен те мала тухнă, çавна пула вăл МТС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

«Заря» колхозра Терентьев юлташ ертсе пыракан бригада ĕçлет. Паянхи кун тĕлне çак колхозри тракторсем 70 гектар сухаланă.

Анчах та пур бригадăсем те лайăх ĕçлеççĕ теме çук-ха. Ларионов юлташ ертсе пыракан бригадăри 1 трактора халĕ те юсаса пĕтермен, тепри вара акана тухнăранпа та 6 гектар çеç сухаланă.

Васильев юлташăн бригади майăн 17-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 34 гектар çеç сухаланă, Сапёров ертсе пыракан бригада та япăх ĕçлет.

МТС паянхи кун тĕлне çуркунне тумалли ĕçсен планне пурĕ те 39 процент кăна пурнăçланă. Ĕç çакăн пек начар пыни чăн малтанах тракторсене япăх юсанинчен килет, çавна пула вĕсем часчасах пăсăлса, ĕçлемесĕр ларaççĕ. МТС директорĕ Лаврентьев юлташ та ĕçе лайăхлатассишĕн кирлĕ пек ĕçлемест-ха, ĕç начар пынине тĕрлĕ сăлтавсемпе витме пăхать. МТС-ри трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва организацилемен. Ĕçе лайăхлатас шутпа трактористсене вырăнтах техникăллă пулăшу парассине йĕркелемелле, малта пыракан Антонов юлташ бригадин ĕç опычĕсемпе пур трактористсене те паллаштармалла.

**И. ШАРКОВ.**

**1944 СУЛХИ МАЙĂН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА**

| Районсем: | Суртăррисем акнă, пĕтĕм план тăрăх (процентпа) | Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем (процентпа) |
|---|---|---|
| Çĕрпӳ | 65,2 | 75,1 |
| Чурачăк | 63,1 | 74,7 |
| Калинино | 61,5 | [illegible] |
| Красноармейски | 59,9 | 54,1 |
| Елчĕк | 59,3 | 57,3 |
| Вăрнар | 56,5 | 77,2 |
| Сĕнтĕр | 54,2 | 61,2 |
| Элĕк | 52,3 | 63,9 |
| Шăхасан | 50,1 | 58,7 |
| Вăрмар | 48,2 | 56,4 |
| Шупашкар | 47,2 | 47,1 |
| Чкаловски | 44,5 | 54,1 |
| Сĕнтĕрвăрри | 44,2 | 56,6 |
| Канаш | 43,3 | 56,1 |
| Куславкка | 42,1 | 51,9 |
| Комсомольски | 42,1 | 47,9 |
| Октябрьски | 40,4 | 52,0 |
| Тăвай | 40,0 | 43,4 |
| Муркаш | 39,3 | 48,3 |
| Етĕрне | 37,3 | 48,1 |
| Ишлей | 36,3 | 43,6 |
| Советски | 34,7 | 44,6 |
| Пăрачкав | 32,4 | 38,6 |
| Йĕпреç | 30,9 | 39,5 |
| Шăмăршă | 29,2 | 34,6 |
| Хĕрлĕ Чутай | 26,6 | 35,4 |
| Первомайски | 26,3 | 29,6 |
| Çĕмĕрле | 25,2 | 27,1 |
| Кувакино | 20,7 | 24,1 |
| Улатăр | 20,0 | 23,3 |
| Шупашкар хули | 53,3 | 89,4 |
| Пĕтĕмпе | 43,8 | 51,1 |
| Майăн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă | 26,9 | 32,5 |

* * *

Республикăри колхозсем майăн 15-мĕшĕ тĕлне суртыррисене пурĕ 43,8 процент, вĕсенчен: пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене 51,1 процент, сурхи тулă, сĕлĕ тата урпа—58,0 процент акнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене акмалли плана 29,0 процент, нумай çул ӳсекен курăксене акмалли плана 34,8 процент тултарнă.

Майăн 10-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче республикăри колхозсем пахча-çимĕçсем, выльăхсене çитермелли тымар çимĕçсемпе силослăх культурăсем акма тытăнчĕç. Пахча-çимĕçсем акмалли плана 10 процент, выльăх апачĕлĕх тымар-çимĕçсемпе силослăх культурăсем 567 гектар акнă.

Кок-сагыз акмалли плана республикăри колхозсем тултарса пыраççĕ, пурĕ 95,3 процент акнă. Çак культурăна акмалли плана Комсомольски район—208,6 процент тултарнă. Çавăн пекех Чурачăк, Шăхасан, Елчĕк, Канаш районĕсем те планпа пăхнинчен ирттерсе акнă. Анчах та Шăмăршă, Чкаловски, Çĕрпӳ районĕсем плана 40—82 процент таран çеç тултарнă. Кок-сагыз акассипе Красноармейски район начар ĕçлет.

Пур йышши суртыррисене те акас тĕлĕшпе иртнĕ пилĕк кунлăхра Çĕрпӳ районĕ лайăх ĕçлерĕ. Майăн 10-мĕшĕ тĕлне вăл 5-мĕш вырăн йышăннăччĕ, халĕ 1-мĕш вырăна тухрĕ. Ун хыççăн Чурачăк, Калинино, Красноармейски, Елчĕк, Вăрнар, Сĕнтĕр районĕсем пыраççĕ. Çĕрпӳ районĕ пилĕк кун хушшинче 3410 гектар акнă. Иртнĕ пилĕк кунлăхра Муркаш, Калинино районĕсем ака хăвăртлăхне нумай чакарчĕç. Çавăнпа, Муркаш районĕ 7-мĕш вырăнтан 19-мĕш вырăна анса ларчĕ, вăл пурĕ те 7,6 процент кăна ӳсĕм турĕ. Çĕрпӳ, Элĕк, Вăрнар, Сĕнтĕр, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсем пилĕк кун хушшинче 25—29,4 процента çити ӳсĕм пачĕç. Уйрăмăнах Элĕк районĕн хăвăртлăхĕ аван, çак район 5 кун хушшинче 29,4 процент ӳсĕм пачĕ.

Улатăр, Кувакино, Çĕмĕрле, Первомайски, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай районĕсем малтанхи пекех чăтма çук юлса пыраççĕ. Çак районсем суртыррисене акмалли плана пурĕ те 20—26,3 процента çити çеç тултарнă.

Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал çураки ĕçĕсем вăрахăн пыраççĕ. 1943 çулхи майăн 15-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем çураки планне 83,3 процент тултарнă пулнă. Кăçал вара пурĕ те 43,8 процент чухлĕ кăна акнă.

Çураки ĕçне тăсса пыма халĕ нихăш районăн та нимĕнле сăлтав та çук, ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсене те мобилизацилесен, районсем кашни кун акмалли заданисене пурнăçласа пыма пултараççĕ, пурнăçламалла та.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## МАЙĂН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Майăн 16-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.**

**Майăн 15-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ÿкернĕ.**

☆ ☆ ☆

### ПИРĔН АВИАЦИ ПОЛОЦК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАПĂННИ

Майăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци ПОЛОЦК чугун çул узелне тапăннă. Чугун çул узелĕнчи эшелонсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче 7 взрыв пулнă, вĕсенчен пĕр взрывĕ питĕ вăйлă пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

## МАЙĂН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Майăн 17-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.**

**Майăн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем ни мĕçсен 9 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ÿкернĕ.**

☆ ☆ ☆

### ПИРĔН АВИАЦИ МИНСК, БАРАНОВИЧИ, ХОЛМ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшманăн **Минск, Барановичи, Холм** (Ковельтен хĕвеланăçнерехре) чугун çул узелĕсенче капланнă çар эшелонĕсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула **Минск** чугун çул узелĕнче 7 тĕлте пушар тухнă, вара вĕсем, пурте пĕрлешсе, питĕ пысăк пушар пулса кайнă. Вăйлă взрывсем нумай пулнă. **Барановичи** чугун çул узелĕ çине те бомбăсем нумай пăрахнă.

**Холм** чугун çул узелĕнче (Ковельтен хĕвеланăçнерехре) пирĕн самолетсем тапăннă чухне тăшман çарĕсемпе техникине тиенĕ поездсем нумай пулнă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе темиçе эшелона çĕмĕрсе тăкнă. Пушарсем нумай тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Самолет çинчен ÿкерсе илнĕ фотоÿкерчĕк палăртнă тăрăх, чугун çул узелĕнче вагонсем, платформăсем тата çар склачĕсем çуннă. Пушар хĕмне пирĕн летчиксем 100 километр ытла вĕççе кайсан та курнă.

Пирĕн 3 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçри боецсем тăшман траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă та кĕске вăхăт хушши пынă тытăçу хыççăн çав траншейăсене тытса илнĕ. Траншейăсене каялла туртса илме хăтланса, нимĕçсем икĕ хут контратака тунă. Анчах та вĕсен контратакисем ăнăçлă пулман. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 500 виллине çити выртса юлнă. Пирĕн подразделенисем 150 çынна тыткăна илнĕ. 6 тупă, 16 миномет, 22 пулемет, 120 винтовка тата 10 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Днестр шывĕн сылтăм енче, иртнине пĕр гвардейски чаçăн подразделенийĕсем тăшмана атакăланă. Çапăçу хыççăн совет гвардеецĕсем паха позицисене туртса илнĕ. Гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕн авиацийĕ Финн заливĕнче тăшман судниссене пырса çапнă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе нимĕçсен 3 тральщикĕ тата хуралта çÿрекен 2 катерĕ шыва путнă.

Тăшман конвойĕ тĕлĕнче сывлăшра пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 16 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Львов облаçĕнчи кĕрешекен партизансем Шоре ячĕпе тăракан отрядĕнчи пĕр ушкăн май уйăхĕн пуçламăшĕнче çасартăк пĕр чугун çул станцине вăркăнса кайнă. Тăшман хуралне пĕтерсе хыççăн, совет патриочĕсем çыхăну линине [illegible] антарнă, станцине кĕмелли тата унтан тухмалли стрелкăсене сирпĕтсе янă, тăшманăн çар складне [illegible]. Суворов ячĕпе тăракан отряд партизанĕсем, минăсем хурса, нимĕçсен çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Çак крушенире пĕр паровоз тата боеприпас тиенĕ 9 вагон çĕмĕрĕлнĕ. [illegible] партизансем 300 метр тăршшĕ чугун çул рельсĕсене сирпĕнтерсе янă. Чугун çулăн çав участокĕнче вара 3 кун хушши поездсем çÿреме пултарайман.

* * *

Румынин Хĕрлĕ Çар йышăннă районĕсенче пурăнакан халăх халĕ ĕнтĕ вăрçă пирки тата Румыние вăрçа кĕртсе янă тăшман Германи пирки хăй мĕн шухăшланине пытармасăр калаçать. Хырлау хулинчи примари (вырăнти власть органĕ) пуху пулнă. Пухура 300 çынна яхăн пулнă. Çав пухура хула примарĕ Константинеску священник тата ытти çынсем те туха-туха каланă. Константинеску священник çапла каланă: «Нимĕçсем пире Хĕрлĕ Çар кунта килсен Румыни халăхне темĕн пек хăрушă асапсем кăтартасси çинчен питĕ нумай суйса каларĕç. Анчах эпир халĕ пурте çакна лайăх куртăмăр: нимĕçсем пире намăса пĕлмесĕр суйнă. Эпĕ кунта юлнăшăн хама хам телейлĕ çын тесе шутлатăп, эпĕ Хĕрлĕ Çара мĕн чухлĕ вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшатăп». Священник Аргир Попа хăйĕн прихожанĕсем умĕнчи проповеçре çапла каланă: «Халĕ эпир ĕнтĕ пурте çакна куратпăр: Хĕрлĕ Çар Румыни çĕрне туртса илме килмен. Совет çарĕсем кунта нимĕçсене хăваласа кăларма килнĕ. Пур ĕненекенсем те, пур румынсем те Хĕрлĕ Çара пулăшма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар пирĕн тăван çĕршыва нимĕçсенчен тасатать. Нимĕçсем вĕсем Румыни халăхĕн тăшманĕсем пулнă».

Сучава хулинчи истори музейĕн директорĕ Сорочан профессор çапла каласа панă: «Нимĕçсен çар влаçĕсем истори музейĕнче тата унăн библиотекинче çар чаçне вырнаçтарчĕç. Каялла чакма тытăнсан, нимĕçсем музее çĕмĕрсе пĕтерчĕç, музейри япаласене вăрласа кайрĕç. Вĕсене хуларан хăваласа кăларнă хыççăн [illegible]. Акă мĕн туса хучĕ нимĕç [illegible]».

Помещик Василе Алексеку çапла каласа кăтартнă: «Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра эпĕ нимĕçсене хирĕç тăрса вăрçнă. Унтанпа нимĕçсем татах та ытларах намăса пĕлми пулса кайнă, вĕсем Румынирен нефть, апат-çимĕç тата чĕртавар турттарса кайрĕç. [illegible] совет çарĕсем Румыние килсен, [illegible]. Анчах та вырăссем мирлĕ халăха [illegible]. Нимĕç салтакĕсем манран [illegible] тата 3 трактор турттарса илчĕç. [illegible] Хĕрлĕ Çар Румыни [illegible] нимĕçсене Румынирен хăваласа ямалла».

## Граната ывăтакансен ăмăртăвĕн итогĕсем

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ тата физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕ йышăннă тăрăх, апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшĕнчен граната ывăтас тĕлĕшпе республикăра [illegible] ăмăрту пулса иртнĕ. Ăмăртăвăн программи: гранатăна инçете ывăтасси тата «окопа» персе çитересси.

Çак ăмăртăва пĕтĕмпе 71.414 çын (вĕсенчен 15.183-шĕ комсомолецсем) хутшăннă. Ăмăртăва хутшăннисенчен 64.880 çын 1-мĕш сыпăкри ГТО нормине, 28.109 çын II-мĕш сыпăкри нормине, 34.273 çын БГТО нормисене панă.

Ăмăрту Çĕмĕрле, Елчĕк районĕсенче [illegible] Шупашкар, Канаш тата Етĕрне хулисенче организациленнĕ иртнĕ. Анчах та Кувакино, Калинино, Пăрачкав, Куславкка ВЛКСМ райкомĕсем районти физкультура комитечĕсем çак ăмăртăва тивĕçлипе ертсе пыман. Çавна пула çав районсенче ăмăртăва çынсем сахал хутшăннă.

## Государство промышленноçĕн Харьковри çуртне юсаса пĕтерессĕ

Вăрçă пуçланичен Харьков хули 14 хутлă çуртпа тивĕçлипе мухтанатчĕ. Вăл çурт пĕтĕм Совет Союзĕнче чи пысăк çуртсенчен пĕри пулнă, вăл Государство промышленноçĕн çурчĕ пулнă. Вăл çуртра республикăри тата облаçри 100 организаци ытла ĕçленĕ, унта наукăпа тĕпчев институчĕсем темиçе вуна пулнă. Нимĕçсем [illegible] çурта 12 [illegible] çурта пĕтерсе [illegible] хăтланнă, [illegible].

Халĕ çак çурта юсаççĕ. 6.000 тăваткал метр [illegible] хатĕр ĕнтĕ, чÿречесене 3.000 тăваткал метр кантăк [illegible]. Çак çурта пĕтĕмĕшпе 50.000 тăваткал метр [illegible] 60.000 тăваткал метр [illegible] кантăк лартассĕ. Халĕ çак çурта [illegible] 12 уйăхра юсаса пĕтерессĕ (ТАСС).

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ОДЕССĂРА. Ÿкерчĕк çинче: Ришелье памятникĕ патĕнче. В. МАЛЫШЕВПА В. ИВАНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

## Çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

ВКП(б) Центральный Комитечĕ çар çыннисен çемьисене пулăшу парас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен йышăннă постановление пурнăçласа, республикăри чылай ВКП(б) райкомĕсем, райсовет тата хула совет исполкомĕсем фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе лайăхлатрĕç.

1944 çулта çар çыннисен çемьисене 2.800 пуç майракаллă шултăра выльăхсемпе сыснасем парса пулăшнă, çĕр участокĕсем уйăрса панă, 325 çемьене лайăх хваттерсене вырнаçтарнă, 450 çемьен хваттерĕсене юсанă, çĕнĕрен 8 çурт лартнă, 44.842 кубометр вутă турттарса панă, 22 колхозра ача çурчĕсем уçнă (унта 228 тăлăх ачана вырнаçтарнă), 678 тăлăх ачана уйрăм çынсем усрава илнĕ, 1.320 ачана ачасен учрежденийĕсене вырнаçтарнă, 1.250 ача обществăллă столовăйсене çÿрессĕ.

Чылай районсенче çар çыннисен çемьисене пулăшма ятарласа фондсем тунă. Кăçал пĕррмĕш кварталта кăна 15.682 çемьене çимĕçсем парса пулăшнă, 29.700 пăт тырă, 239.925 тенкĕ укçа, 4.632 мăшăр урана тăхăнмалли япаласем, 2.537 мăшăр çие тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем парса пулăшнă.

Шупашкар районĕнче виçĕ уйăх хушшинче çар çыннисен çемьисене 340 пуç выльăх-чĕрлĕх сутнă, 48 центнер çĕрулми вăрлăхĕ панă. 523 çемьене 184 центнер тырă тата 15.000 тенкĕ укçа парса пулăшнă. 347 çынна урана тата çие тăхăнмаллисем панă.

Калинино районĕнче те çар çыннисен çемьисене тивĕçлипе пулăшаççĕ. Пĕрремĕш кварталта кăна 510 центнер тырă панă, 5 колхозра ачасен çурчĕсем уçнă. Колхозсем çар çыннисен çемьисене 5 çурт çĕнĕрен лартса, 54 çурт юсаса панă.

Кун пек тĕслĕхсем ытти районсемпе хуласенче те чылай. Анчах тумалли ĕçсем татах нумай.

Чылай районсенче, хăшпĕр руководительсен çаврăнăçусăрлăхне пула, çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсем çине сиелтен пăхаççĕ. Пăрачкав районĕнче февраль уйăхĕнче çар çыннисен 966 çемьине пособисемпе пенси укçисене кая юлса тÿленĕ. Красноармейски районра декабрьпе январь уйăхĕнчи укçа куçарнă хутсем февраль уйăхĕччен райониа çыхăну уйрăмĕнче выртнă.

Çак фактсем вĕсем асăннă районсенче пенсисемпе пособи укçисене тÿлес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнинчен килнĕ. Ку ĕçшĕн райсоветсем çумĕнчи пособисемпе пенси парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем ответлă пулмалла. Вĕсен, пенси е пособи памалла тунипе пĕрлех, çав укçасене вăхăтра тÿленине те тĕрĕслесе тăмалла. Кувакино тата Сĕнтĕр районĕсенче пенсисемпе пособи укçисене парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ.

Хăшпĕр районсенче çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсемпе жалобисем çине чунсăрла-бюрократла пăхассине халĕ те пĕтермен. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Комсомольски, Вăрнар, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче ĕçсем япăх. Çапла, Ленинград хулинчен эвакуаци йĕркипе «Комбайн» колхоза (Комсомольски район) куçса килнĕ фронтовик арăмĕ Антонина Константиновнăн çимелли тата вутă пулман. Вăл колхоз председателĕнчен пулăшу ыйтнă. Унăн ыйтăвĕ çине председатель: «колхозра нимĕнле фонд та тата ытлашши кĕлте те çук, фермăра та пурăнма пултаратăр», тесе резолюци çырнă.

Кун пек фактсем татах та пур. Калас пулать, районри хăшпĕр руководительсем çар çыннисен çемьисен пурнăçне лайăхлатас ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ.

Чи пысăк çитменлĕх вăл — хăшпĕр районсенчи суту-илÿ организацийĕсем начар ĕçлени. Первомайски, Комсомольски, Пăрачкав, Шăхасан, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче çар çыннисен çемьисене çăкăр паёкĕсене вăхăтра памаççĕ.

Çар çыннисен çемьисене пулăшасси пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисен чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа ку ĕçри çитменлĕхсене халех çине тăрса пĕтермелле.

### Пĕр миллион литр сĕт Тăван çĕршыва сыхлакансен сывлăх фончĕ валли

Çак çулхи тăватă уйăх çурă хушшинче колхозсемпе колхозниксем Тăван çĕршыва сыхлакансен сывлăх фондне пĕр миллион литр сĕт панă. Вăл шутран Мускав облаçĕнчи ĕççыннисем — 107.000 литр, Курск облаçĕнчи ĕççыннисем — 133.000 литр, Иваново облаçĕнчи ĕççыннисем — 100.000 литр панă.

Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсене ответлесе, Ярославль облаçĕнчи колхозсенчи 5.475 хуçалăх Тăван çĕршыва сыхлакансем валли çак çул пĕтиччен 243.000 литр сĕт пама пулнă. Иваново облаçĕнчи Ильино районĕнчи колхозниксем кашни артельтех кварталсерен 100 литртан кая мар сĕт парса тăма пулнă. (ТАСС).

### Мускав театрĕсен артисчĕсем Севастопольте

Малый театрăн фронтри филиалĕ Керчь хулинчен Севастополе пынă. Ирĕке кăларнă хула халăхне майăн 13-мĕшĕнче пĕрремĕш спектакль лартса панă. Островский çырнă «Айăпсăр айăплисем» ятлă пьесăна кăтартнă. Севастополь çыннисем Мускав артисчĕсене питĕ хавасланса йышăннă.

Хулара çавăн пекех тата Большой театр бригади те ăнăçлă ĕçлет. (ТАСС).

### Харьковри Шевченко ячĕпе тăракан литературăпа художество музейĕ

1941 çулхи кĕркунне Шевченко ячĕпе тăракан центральнăй музейĕн тата картина галлерейин мĕнпур хаклă япалисене Киевпа Харьковран Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи районĕсене куçарнăччĕ.

ЦК КП(б)У тата Украина Совнаркомĕ нумаях пулмасть Харьковра Тарас Шевченко ячĕпе литературăпа художество музейĕ уçма йышăннă. Музей валли хулари чи илемлĕ çуртсенчен пĕрне панă. Çак музейра, 5 пин картина ытла, скульптура, керамика, ковер, çавăн пекех тата украина халăх творчествин ытти япалисем те пулмалла. Çак музее унччен Киевра Шевченко ячĕпе тăнă центральнăй музейре тата Харьковри картина галлерейинче пулнă экспонатсене те пĕтĕмпех параççĕ. (ТАСС).

## Тинĕс-Çар шкулĕсене кĕме хатерленекен училищĕсене вĕренме илеççĕ

Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн Тинĕс-Çар вĕренÿ заведенийĕсен управленийĕ Тинĕс-Çарĕн аслă шкулĕсене кĕме хатĕрлекен училищĕсене вĕренме илет. Çав училищĕсене вĕренме илнĕ çамрăксене Тинĕс-Çарĕн аслă шкулĕсене кĕме вĕрентсе хатĕрлесе çитерĕççĕ. Вĕренме илнисене пурне те стипенди параççĕ.

Вĕренме илнĕ чухнехи экзаменсенче вăтам шкулăн 7-мĕш класĕн программи тăрăх ыйтаççĕ. Чи малтан Тинĕс-Çар Флочĕн тата Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсен ачисене илеççĕ.

Çав училищĕсене 15—16 çулхи çамрăксене илеççĕ. Заявленисене августăн 15-мĕшĕччен училище начальникĕ ячĕпе памалла. Заявленипе пĕрле вĕренÿ заведенине вĕренме кĕме кирлĕ пур документсене те памалла.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Ленинград, Главное Адмиралтейство, уполномоченному Гопеву для подготучилища; Горький, Гребешковская улица; Владивосток, Менжинская улица, 65; Баку, Нижне-Бульварная улица, 16. (ТАСС).

## Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Великобританин правительствисем Норвеги территорийĕнче гражданла администраци тăвас тĕлĕшпе Норвеги правительствипе килĕшÿ туни çинчен

Пĕрлешÿллĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительствисем Норвеги территорине союзниксен экспедициллĕ вăйĕсем ирĕке кăларнă хыççăн унта гражданла администрацине законсем пирки мĕн тумалли çинчен калаçса татăлса килĕшÿсем тунă.

Çав килĕшÿсем вăхăтлăха тунă практикăллă килĕшÿсем пулса тăраççĕ пулмалла, тесе шутлаççĕ. Вĕсене союзниксен командующийĕсен задачисене тата союзниксен правительствисен пĕрлехи тĕллевне — нимĕçсене Норвеги территорийĕнчен чăрах хăваласа кăларса, Германие пĕтĕмпех çĕнтересси̇не пурнăçлама ытларах пулăшас тесе тунă.

Килĕшÿсенче çапла каланă: Норвегие ирĕке кăларнă тапхăрта унта чи аслă власть союзниксен командующийĕсен аллинче пулмалла, çав командующисен, вăрçă условийĕсене кура, гражданла администраци тĕлĕшпе пĕтĕмпех ответлă пулмалла. Вăрçă условийĕсем май парсанах вара Норвеги правительстви, конституци кăтартнă тăрăх, гражданла администраци тĕлĕшпе пĕтĕм ответлăха каллех хăйĕн аллине илмелле. Норвеги территорийĕнче союзниксен çарĕсене вăрçа вĕçнех çитермешкĕн кирлĕ пулма пултаракан хатĕрсем памалла.

### АНГЛИПЕ США ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕМ ГОЛЛАНДИПЕ БЕЛЬГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ СЕМПЕ КИЛĔШÿСЕМ ТУНИ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 16-мĕшĕнче Лондонра çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешÿллĕ Королевствăпа Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем нидерландсемпе Бельги территорийĕсене союзниксен экспедициллĕ вăйĕсем ирĕке кăларнă хыççăн Европăри нидерландсен тата Бельги территорийĕнче гражданла администрацине законсем пирки мĕн тумалли çинчен вĕсен правительствисемпе килĕшÿсем тунă.

Килĕшÿсем туни çинчен официально пичетлесе кăларнă пĕлтерÿсенче çапла каланă: «Çак килĕшÿсем пирки совет правительствипе канашланă, вăл çав килĕшÿсемпе килĕшнĕ», тенĕ.

### СОВЕТ СОЮЗĔН ОРДЕНĔСЕНЕ АНГЛИН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ПАНИ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕн Англири посолĕ Гусев юлташ паян Совет Союзĕн çарти аслă наградине — 1-мĕш степень Суворов орденне — СССР Верховный Совет Президиумĕ наградăланă çак çынсене панă: импери генеральнăй штабĕн начальникне Аллан Брук фельдмаршала, Джон Товей адмирала тата Англин бомбардировочнăй авиацийĕн командующине — авиаци главнăй маршалне Артур Гарриса. Çавăн пекех тата 1-мĕш степень Суворов орденне метрополи флотĕн командующине Брюс Фрезер адмирала тата союзниксен Италири çарĕсен главнокомандующине Гарольд Александер генерала панă.

Орденсем парсан, Гусев çапла каланă: çакă вăл наградăна илнĕ çынсен вăрçăри ĕçĕсене пысăка хурса хакланине пĕлтерет тата вăл Англипе Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем вăрçăра пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçленине кăтартать, тенĕ.

## Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем, малтанхи пекех, «Густав линийĕн» кăнтăрти секторне хирĕç вăйлă наступлени туса пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕ Лири шывĕ улăхĕнчи Рапидо шывĕ çинчи кĕпер умĕнчи укрепление аслăлатнă, тăшманăн тĕреклĕ пункчĕсене туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах американецсен 5-мĕш армийĕнчи француз чаçĕсем кăнтăртарахри тусем çинче малалла куçнă. Çурçĕртен кăнтăралла Аузония урлă каякан çул çинче нимĕçсем организованно хирĕç тăма пăрахнă. Америка çарĕсем çав çултан хĕвеланăçнерехри Спиньо. ялне туртса илнĕ.

Тинĕс-çар флотĕн карапĕсем, артиллерипе персе, американецсен 5-мĕш армийĕн сулахайри флангне пулăшса пыраççĕ.

Союзниксен вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.800 вĕçев ытла тунă.

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: «Густав линийĕшĕн» çаплах вĕçĕмсĕр çапăçаççĕ. Кассино хулинчен çурçĕртерехри сăртсенче улшăнусем пулман. Лири шывĕн улăхĕнче халĕ акăлчансемпе индеецсен çарĕсем тăшмана унăн малтанхи позицийĕсен пысăк пайĕнчен хăваласа кăларнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн кĕпер умĕнчи укрепленине аслăлатнă. Союзниксен çарĕсене малалла куçма чарасшăн хăтланса, тăшман тылри çĕнĕ позицисенче хирĕç тăрса çапăçать. Лири шывĕнчен кăнтăртарахра тăшманăн «Густав линийĕнчи» позицийĕсене халĕ пурне те союзниксен çарĕсем йышăннă. Америкăн 5-мĕш армийĕнчи французсемпе американецсен çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, «Адольф Гитлер линийĕ» патнелле куçса пыраççĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.800 вĕçев ытла тунă.

ЛОНДОН, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: «Густав линийĕшĕн» пыракан çапăçусем вĕçленсе пыраççĕ, халь ĕнтĕ «Адольф Гитлер» линийĕшĕн çапăçма пуçлаççĕ. Коссинăран çурçĕртерехре çĕнĕрен атакăсем пуçланса кайнă. Питĕ вăйлă çапăçнă хыççăн союзниксен çарĕсем паха высотана тытса илнĕ. Лири шывĕ улăхĕнче тата кăнтăртарахри сăртсем çинче Америкăн 5-мĕш армийĕпе Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем наступлени туса пынă, нумай участоксенче вĕсем «Гитлер линийĕн» малти çарĕсем патне пырса çитнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Француз çарĕсем Эсперия хулине туртса илнĕ, çав хула вăл «Гитлер линийĕн» малти хулисенчен пĕри пулса тăрать.

Союзниксен авиацийĕ Италири тата Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Майăн 16-мĕшĕнче союзниксен тинĕс-çар карапĕсем, Америкăн 5-мĕш армине пулăшса пырса, тăшманăн Итри-Формия секторĕнчи (Гаэт заливĕн çыранĕнчи) артиллери позицийĕсене тата пĕр çĕре капланса тăнă çарĕсене» пенĕ.

## Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

### АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, майăн 15-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсем тăшманăн Бельгири тата Францири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Майăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Людвигсхафен хули çине (Çурçĕр-хĕвеланăç Германи) тата Францири аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă районра пушарсем нумай тухнă. Вăйлă взрыв пулнă. Çав тапăнура фугаслă бомбăсем нумай пăрахнă, кашни бомби 1.800 килограмм таять.

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Берлинри çар объекчĕсене тапăннă.

### ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Хорватире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем халĕ Бихач хулинчен хĕвеланăçнерехри Прибой сывăхĕнче çапăçаççĕ.

Македонире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсене тăшман çапăрса илнĕ пулнă. Анчах та çав чаçсем, тăшман хăйсенчен йышлăрах пулнă пулин те, ункăран татса тухнă, çавăн чухне тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ.

Словенире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем тăшманăн пысăк группировкине аркатса тăкнă. Çав группировкăра темиçе пин салтак пулнă. Вара халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Жуженберкпа Требне хушшинчи района пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ.

* * *

Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарта темиçе пин хĕрарăм тăрать. Югослави хĕрарăмĕсем фашизма хирĕçле фронт организацийĕнче халĕ 500.000 хĕрарăм ытла тăрать. Вĕсенчен нумайĕшĕ оккупациленĕ территорире нимĕçсене хирĕç вăрттăн кĕрешеççĕ. Фашизма хирĕçле фронт тавра Югославири мĕнпур нации патриочĕсем, мĕнле тĕне тытнине пăхса тăмасăр, тачăн пĕрлешсе тăраççĕ.

## Чăваш АССР Прокуратуринче

### Акмалли вăрлăхсене вăрланăшăн

Красноармейски районри «Большевик» колхозăн колхозници Ильина вăрлăх турттарнă чухне 6 пăт тырă вăрланă, çавăншăн ăна халăх сучĕ икĕ çул хушши тĕрмене хупмалла тунă.

Сĕнтĕр районĕнчи Челюскин ячĕпе тăракан колхоз бригадирне А. В. Волкова акмалли нормăна чакарса 128 килограмм вăрлăхлăх тырра вăрланăшăн суда панă.

Çав районрах «Прожектор» колхозăн ревизи комисси председательне А. Кирпичникова 100 килограмм вăрлăхлăх çĕрулми вăрланăшăн суда панă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ПТ 00136 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.